# ВАЛЕНТИН КУНĔ. ЮРАТУ УЯВĔ

Михаил СМИРНОВ

### ЧИ МАЛТАН МĔН ПУЛНĂ?

*(Шухăш...)*

«Таса çырура» çыраççĕ:
Малтан пулнă, тет, сăмах.
Вара тĕнчисем пулаççĕ,
Кайран — çын валли çăтмах.

Эп сире, туссем, каласшăн:
Малтан пулнă Юрату.
(Çавăнпа чунтан саватпăр).
Кайран — сăмах — сывату.

Юратса Тĕнчи майлашнă,
Пултăр, тесе, çын валли.
Чĕрлĕх-пурлăхĕ яйлашнă
Ăраскалшăн туп-тулли.

Тур кĕлеткисем, пурнатпăр
Илсе Унăн сăнарне.
Пирĕштисем пек курнатпăр,
Юратсассăн пĕр-пĕрне.

Хамăра ялан упрасчĕ,
Çапла чĕререн савса.
Тутлă туйăма усрасчĕ,
Çут Тĕнчере савăнса.

Чир-чĕрсем те çулăхаймĕç,
Туррăн çулĕпе пырсан.
Пуçтахсем те кун кураймĕç,
Эпир тату пурăнсан.

Çакна эсир вуласассăн,
Тавçăруллă тусăмсем,
Хакне парăр, тен, пĕр саслăн:
«Сăн ку — тутлă туйăмсем».

Е тата çакна та калăр:
«Ку этем çĕн уй хушать.
Пĕлнипе пуласчĕ сапăр —
Вăл пур — темĕн аташать».

Пурпĕр эп сире калатăп
Халиччен илтменнине.
Сирĕн асăрта юласшăн
Сăввăмсен илемĕпе.



Сергей ЕРМОЛАЕВ

### ЭС ПĔЛЕТĔН–И?

Юратса сана
Лартăм сан çумна —
Ĕненетĕн-и?
Манăн чун юрлать,
Эс вăййа тухсан —
Эс пĕлетĕн-и?
Хурăнпа юман
Çумлă ларнăран —
Ĕненĕтĕн-и?
Ăвăс çĕрĕпе
Алă çупнă тет —
Эс пĕлетĕн-и?
Эп сана çĕрре
Патăм тĕлĕкре —
Ĕненетĕн-и?
Юратсан мана
Тайăл ман çума —
Килĕшетĕн-и?

Петр ГАВРИЛОВ-МЕРЕЧЕН

### ЧЫСЛĂ ЮРАТУШĂН

Юрату çинчен çырнишĕн,
Вулакан, ан айăпла:
Сăвăç калăплать
ырришĕн,
Пӳлĕх панă вăй-халпа.

Юрату — кун-çул илемĕ,
Чи вăйли вăл тĕнчере.
Юрату — чĕре хĕлхемĕ,
Чыслă тăвĕ ĕмĕре.

Юрату — ĕçри мухтавлăх,
Чуншăн çурăлнă чечек.
Кирлĕ мар ăна ултавлăх,
Пултăр вăл çăл шывĕ пек.

Юрату — вăй-хал çуначĕ,
Йăлтăркка телей кӳлли.

Яланах ăна упрасчĕ,
Вăл ан пултăр çын кулли.

Юрату аркатĕ вирлĕ
Йăнăш çулпала кайсан.
Чун амакĕ, юлăн чирлĕ,
Пурнăçа ăнланмасан.

Юрату ăспа тăванлă,
Ырламасть вăл пуçтаха.
Юратсах — тĕнче асамлă:
Тур пиллет сăваплăха.

Чыслă, çутă юратушăн
Сăвă-юрă çырăнни.
Ăс пулинччĕ хуть ăрушăн,
Тĕксĕм пулмĕ пурăнни.

Василий МАРТИНКОВ сăнӳкерчĕкĕ.



### КĂВАКАРЧĂН

Сăвви Борис БОРЛЕНĂН.
Кĕвви Алексей НАУМОВĂН.

*Мăшăрне пĕр кăвакарчăн*
*Чарăнмасăр чуп тăвать.*
*Виççĕмĕшĕ пырса ларчĕ,*
*Вăл та темĕскер калать.*

***Хушса юрламалли:***
*Манăн та пулса курасчĕ*
*Кăвакарчăн пек паян.*
*Сан патна пырса ларасчĕ*
*Каçхи улаха тухсан.*

*Кăлтăр-кăлтăр кăвакарчăн*
*Уткалать те чупкалать.*
*Çĕкленет кăвак çуначĕ*
*Виççĕмĕшне хăвалать.*

***Хушса юрламалли:***
*Пур-ши, çук-ши манăн шанчăк,*
*Чун-чĕре ăна пĕлмест.*
*Пурпĕрех ман нихăçан та*
*Виççĕмĕш пулас килмест.*

*Кăлтăр-кăлтăр кăвакарчăн*
*Кăмăлсăр сас кăларать.*
*Иккĕшĕ вĕçсе хăпарчĕç,*
*Виççĕмĕш пĕччен юлать.*

***Хушса юрламалли:***
*Тĕлĕкре вĕçсе çӳретĕп,*
*Тусăм пур пек юнашар.*
*Вăранса кайсан сисетĕп,*
*Тĕлĕк çеç ку, чăнлăх мар.*

# ĔМĔР САНПА, ЮРАТĂВĂМ



Симĕс куçлă, хура вăрăм çӳçлĕ Женьăна класĕнче юратман арçын ача çук пулĕ. Миçе хут ĕнтĕ вăл парта хушшинче ларнă вăхăтра ăнсăртран пуçне çĕклесен хăй çине темиçе мăшăр куç тĕллесе пăхнине асăрханă. Класри хăшпĕр хĕрача ăна ăмсанатчĕ те. Анчах Дуся, унăн чи çывăх юлташĕ, хăй çавăн пек хĕрачан тусĕ пулнишĕн пĕр пытармасăр савăнатчĕ.

— Женя, сана класра мĕнпур арçын ача юрататать. Эп çавна спортзалра вĕсем хăйсем кăна чухне вăрттăн калаçнине те итлесе тăтăм.

— Вара? — питĕ лăпкăн, юлташĕ çине кăшт куларах пăхса ыйтрĕ хĕрача.

— Сан вырăнунта пулсан эп пуçа пĕлĕте çити çĕклесе çӳрĕттĕм, — çивĕччĕн каласа хучĕ Дуся.

— Усси, эпĕ юратмапçке-ха?

Каçса кайсах юратуллă романсене вулакан хĕр пуçĕнче тахçанах идеаллă каччă сăнарĕ калăпланнă. Чи малтан вăл питĕ вăйлă, инкексенчен ăна хӳтĕлекен патвар каччă пулмалла. Унтан ăслă та çепĕç, илемлĕ сăн-питлĕ. Класра вара ун пекки çук. Женя хăй шухăшĕсене, ĕмĕчĕсене кĕнеке вуланă чухне хут таткисем çине çырса хума юрататчĕ, вĕсемпе вăл хăй ăçта вуласа çитнине паллă тăватчĕ. Вуласа тухсан хутсене çурса тăкатчĕ.

Черетлĕ романа вуланă май Женя унти тĕп сăнара юратса пăрахрĕ те хăй шухăшĕсене çыраймасăр чăтаймарĕ. «Ман савни те çапла пулсанччĕ», — тесе çырса хучĕ. Темле майпа ăна кайран çурса тăкма манчĕ, библиотекăна çаплипех кайса пачĕ. Пачĕ те мансах кайрĕ.

— Женя, — каллех тапăнма пуçларĕ Дуся хăйĕн сăнавĕсемпе. — Пĕлетĕн-и, Валентин темле улшăнма пуçларĕ. Вăл сана чи хытă юратакансенчен пĕри.

— Валенти-ин? — тĕлĕнсе кайрĕ Женя. — Çав пĕчĕк, шăнăркка, ялан пуçне чиксе çӳрекен-и?

— Ăхă, вăл саншăн ыттисемпе тӳпелешнине те эп миçе хут курнă.

— Ма?

— Ыттисем эс çавах вĕсем çине пăхманнине туйса сан çинчен начар калама пăхаççĕ те вăл вĕсене чышкă тутантарать.

Çав айван отличник çапăçма та пултарнинчен пĕр вăхăт тĕлĕнсе çӳрерĕ-ха Женя, кайран манчĕ. Хăйĕнчен икĕ çул аслăрах каччă хĕрачана тимлĕх уйăрма пуçласан унăн пуçĕнчен Валентин пĕтĕмпех тухса ӳкрĕ, ăна вăл пачах та курми пулчĕ. Çапла вĕренӳ çулĕ те вĕçленчĕ.

Тепĕр çул шкула кайсан, класа кĕрсенех Женя йăрăс пӳллĕ, сарлака хул-çурăмлă, илемлĕ сăн-питлĕ каччăпа пырса çапăнчĕ; кĕтмен çĕртен пулнипе вăл çухалса кайрĕ, ним тăвайманнипе куçне хупрĕ.

Каччă вара хĕр çине ытараймасăр пăхрĕ.

— Женя, — аран илтĕнмелле чĕнчĕ вăл хĕре.

— Ăçтан пĕлетĕн эсĕ мана? Хăш класран эс? — çаплипех куçне уçмасăр ыйтрĕ хăрача.

— Валентин вĕт эпĕ, — терĕ çирĕппĕн каччă.

— Ва-лен-тин, — тĕлĕнсе куçне чарса пăрахрĕ Женя. — Ой! — терĕ çавăнтах вăл, питне аллисемпе хупласа.

Вăтаннипе хăвăрт класран тухса сирпĕнчĕ. «Валентин, ах, епле намăс! Мĕнле-ха эп тӳрех паллаймарăм. Халь вăл сисрĕ ĕнтĕ хăй пĕрре курсах ман кăмăла кайнине». Çак шухăшсемпе чылайччен нушаланчĕ хĕр. Юрать, Дуся пур.

— Каларăм вĕт, Валентин саншăн тем тума та хатĕррине. Куртăн-и, еплерех вăл ӳссе паттăрланнă. Спортзалран тухман вăл çу тăршшĕпе, веçех саншăн!

— Ăçтан пĕлетĕн-тĕр эс? — теме çеç пултарчĕ Женя.

Вунпĕрмĕш класра пуçланчĕ вĕсен юратăвĕ. Алла-аллăн тытса çӳренинчен иртмерĕ вĕсен туслăхĕ. Женя вара кунран-кун каччине хытăрах юратма пуçларĕ. Хăйне вăл çунат сарнă кăйкăр пек туйрĕ. Чĕрере, ăшра темле пылак-пылак, ӳт-пӳ çăмăл-çăмăл. Çĕрсене чăтăмсăррăн иртеретчĕ вăл, хăвăртрах ир пултарса шкула кайма ăнтăлчĕ.

Февралĕн 14-мĕшĕ çитрĕ. Çак куна Женя тахçантанпа кĕтет. Паян класра вĕсен ташă каçĕ. Тĕплĕн хатĕрленчĕ уява Женя, савнийĕ валли хăй аллипе чĕре çĕлерĕ. Уяв епле иртнине çырса пĕлтерсе вăхăта тăсмăп. Çав кун Валентин хĕрне пĕрремĕш хут килне ăсатрĕ, пĕрремĕш хут чуп турĕ. Кайран темччен пĕр-пĕринчен вăтанса çӳрерĕç çамрăксем. Женя çак кунран меллĕрех урăх вăхăт пулмĕ тесе Валентина хăй чĕрине уçса пачĕ.

— Пĕлетĕн пуль... м-м... паян юратакансен кунĕ, вăт. Юратап сана, Валентин, хам чĕрене сана парап, — терĕ хăвăрт-хăвăрт, аран ăнланмалла Женя, хăй çунакан питне каллех аллипе хупларĕ те каччă енне çурăмĕпе çаврăнса тăчĕ. Валентин ăна ачашшăн çупăрласа илсе хăй çумне пăчăртарĕ.

— Эпĕ те, эпĕ те, Женя, тупа тăватăп. Çак кунран эп ялан сан çумăнта пулăп.

* * *

Унтанпа нумай çул иртсе кайрĕ. Хыçра студент пурнăçĕ, çар хĕсмечĕ юлнă. Ак каллех февралĕн 14-мĕшĕ, юратакансен кунĕ çитрĕ. Çӳçĕсем шуралма пуçланă тĕреклĕ, илемлĕ арçын яштака та хитре хĕрарăма çупăрланă та ăна хăлхинчен тем пăшăлтатса калать. Хĕрарăмĕ телейлĕн ахăлтатса кулать.

— Ну, Валентин, уç ĕнтĕ вăрттăнлăхна? Епле эс çапла вăтанчăк отличникран паттăр арçынна çаврăнтăн?

— Сана юратнипе, — тата хытăрах пăчăртарĕ вăл арăмне.

— Çук, çук... эс ялан çапла калан, — парăнмарĕ Женя.

— Кĕнеке хушшинче савни шыраса çырусем хурса хăвармаççĕ ăна.

— Епле çыру?

— Ак çакна, — туртса кăларчĕ кĕсйинчен сарăхса кайнă хут татăкне Валентин.

Женя хăй куçне хăй ĕненмерĕ. Ара, хăй тахçан çырнăскер вĕт ку.

— Ăçтан тупрăн... хальччен упратăн-и? — тĕлĕнсех кайрĕ хĕрарăм.

— Эпĕ тупман пулсан? Урăххи вуланă пулсан? Шутлама та хăрушă, — шӳтлерĕ арçын.

— Эй-эй, айванскер. Шăпа ку, шăпа. Санран çавах ниçта та тарса каяймăттăм. Валентинăм, тупа тăватăп, ĕмĕр санпа, сан çумăнта пулăп, — терĕ Женя упăшки çине ытарайми пăхса.

— Эпĕ те, эпĕ те, Женя, тупа тăватăп! Юратăвăм эс ман, — терĕ Валентин арăмне хытă-хытă хăй çумне пăчăртаса.

Раман ИРИНККИ.